# ПЕРСОНАЛИИ / PERSONALITIES / ПЕРСОНАЛИСЕМ

## СУМЛĂ ĂСЧАХ, ХИСЕПЛĔ ВĔРЕНТӲÇĔ
**(Ю. М. Виноградов 80 çул тултарнă май)**

## ПОЧТЕННЫЙ УЧЕНЫЙ, УВАЖАЕМЫЙ УЧИТЕЛЬ
**(к 80-летию Ю. М. Виноградова)**

## VENERABLE SCIENTIST, RESPECTED TEACHER
**(on the 80th anniversary of Yu. M. Vinogradov)**

Юрий Михайлович Виноградов, чăваш чĕлхине тĕпчекен тата вĕрентекен паллă ученăй, Чăваш Республикин вĕрентĕвĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, 2026 ç. кăрлачăн 1-мĕшĕнче 80 çул тултарчĕ. Вăл Пушкăрт тăрăхĕнчи Йĕкен ятлă юхан шыв таврашĕнчи Йĕкенпусĕнче çуралса çитĕннĕ. Ялти шкултан вĕренсе тухсан 1960 ç. Юрий Пелепейри педагогика училищине пĕлӳ пухма çул тытать. Тăватă çултан унтан вĕренсе тухать те пĕр çулталăк тăван ялĕнчи шкулта ĕçлет. Малалла вĕренес туртăм ăна часах Шупашкара илсе çитерет, 1965 ç. вăл И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн вырăс тата чăваш уйрăмне вĕренме кĕрет. 1967 ç. Чăваш патшалăх университетне уçсан историпе филологи факультетне унта куçараççĕ. Çапла вара Юрий Виноградов университет студенчĕ пулса тăрать. Вĕреннĕ чухнех унăн студент конференцийĕн тезисĕсен пуххинче пĕрремĕш тĕпчев ĕçĕ пичетленсе тухать.

1970 ç. Юрий Михайлович алла диплом илет. Вăрмар районĕнчи Тупах шкулĕнче темиçе уйăх ĕçленĕ хыççăн университетри чăваш чĕлхипе литература кафедри çумĕнчи аспирантурăна вĕренме кĕрет. Часах Ю. Виноградов аспиранта Совет çарне илеççĕ. Çулталăкран Шупашкара таврăнсан вăл вĕренӳпе тĕпчев ĕçне кӳлĕнет. Чăваш чĕлхинчи тӳрĕ тата тӳрĕ мар пуплевлĕ конструкцисене, пайăр мар пуплеве тишкерсе çырнă диссертацие хӳтĕлесе 1975 ç. филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ пулса тăрать.

1974 — 1977 çç. Ю. М. Виноградов Чăваш АССР Министрсен совечĕ çумĕнчи ăслăлăх тĕпчев институтĕнче вăй хурать. Диссертацире хускатнă ыйтусене малалла — анлăрах та тарăнрах тĕпчет, чăваш орфографийĕн кун-çулне тишкерет, чăваш чĕлхин графикипе орфографийĕ çинчен статья хатĕрлет.

1977 ç. ăна университетăн чăваш чĕлхи пĕлĕвĕн кафедрине ĕçлеме чĕнеççĕ. Малтанласа аслă преподавательте вăй хурать, 1984 ç. доцент пулса тăрать. Юрий Михайлович студентсене чăваш чĕлхин методикине, синтаксисне, орфографийĕпе пунктуацине, литература чĕлхин историне вĕрентет, хăй вĕрентекен курссен программисене, методика кăтартăвĕсене, хăнăхтарусен тата тĕрĕслев ĕçĕсен пуххисене хатĕрлесе кăларать. Çав вăхăтрах вăл çыру йĕркин татса паман ыйтăвĕсене тата пуплев культурин ытти çивĕч проблемисене ăслăлăх статйисенче те, хаçат-журналти материалсенче те çине-çинех сӳтсе явать. Аслă ĕçтешĕсемпе — И. А. Андреевпа тата И. П. Павловпа пĕрле чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ чĕлхе тытăмĕпе килĕшӳллĕ, çав вăхăтрах пурне ăнланмалла та усă курма меллĕ пултăр тесе тăрăшать. Чăваш чĕлхин орфографи словарьне хатĕрлес ĕçе хутшăнать. Тĕрлĕ сăлтава пула словаре пичетлесе кăларичченн темиçе хут та редакцилеме тивет, çак ĕçе Ю. М. Виноградов И. П. Павловпа пĕрле туса пырать. Словарь 2002 ç. тин кун курать.

Çирĕм çула яхăн студентсене чăваш чĕлхин тытăмĕпе паллаштарса тарăн пĕлӳ парса пурăннă хыççăн Юрий Михайлович 1995 ç. Чăваш Республикин вĕренӳ институтне куçать. Чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсене ăсталăхне туптама пулăшать: учительсене чĕлхе пĕлĕвĕн теорийĕпе практикинчи уйрăмлăхсемпе, вĕрентӳри меслетлĕхпе, шкул вĕрентĕвĕнчи çĕнĕлĕхсемпе паллаштарать. 2014 çулччен чăваш чĕлхипе литературин кафедрине ертсе пырать, унтан çак кафедрăрах доцент пулса тăрăшать. Каярах, шкулта тăван чĕлхене вĕрентмелли программăсене çĕнетесси, вĕсене тивĕçлĕ вĕренӳ кĕнекисемпе хатĕрĕсене кăларасси вăраха хăварма юраманран, Ю. М. Виноградовăн çак ĕçе

ертсе пыракансенчен пĕри пулма тивет. Çавăнпа та вăл институтри Наци вĕрентĕвĕн центрĕнчи ăслăлăх ертÿçĕ ĕçтешĕ пулса тăрать, паян кунччен Чăваш Республикин вĕренÿ институчĕн Регион аталанăвĕн центрĕнче вăй хурать. Паянхи чăваш шкулĕнчи чăваш чĕлхи учебникĕсем ун концепцине тĕпе хурса, пурте тенĕ пекех вăл ертсе пырса е хутшăнса тунисем. 10 — 11-мĕш классем валли кăларнă кĕнекен авторĕ Ю. М. Виноградов хăй анчах, унти чĕлхе пĕлĕвĕн материалĕ хăех пĕр ăслăлăх ĕçĕпе танлашать теме пулать.

Юрий Михайлович пурнăçне, тĕпрен илсен, вĕренÿ ĕçне халалланă. Çапах та вăл тĕпчевçĕ пулма самантлăха та пăрахмасть. Сăнама, асăрхама ăстаскер, кулленех чăваш пуплевĕнчи улшăнусене палăртса пырать, чĕлхе хăйне евĕрлĕхне упрама чĕнет. Çитес вăхăтра вăл хатĕрленĕ тулли орфографи словарĕ тухмалла. Хальхи вăхăтра орфографипе пунктуаци йĕркисене çирĕп тытса пыма чĕнекен, тăван чĕлхе, тăван пуплев, тăван çырулăх тытăмне упрама хистекен «сыхчă» теме пулать Ю. М. Виноградова. Чыслăн, тивĕçлĕн, кÿрентерме пăхакансене парăнмасăр çирĕппĕн утать аслă юлташăмăр, суйласа илнĕ çултан-йĕртен пăрăнма шутламасть те.

Хисеплĕ ăсчаха тата вĕрентекенĕмĕре çĕнĕ тĕпчевсем хайлама çирĕп сывлăх сунатпăр.

А. П. ДОЛГОВА,
старший научный сотрудник ЧГИГН

## Основные труды Ю. М. Виноградова

Признаки косвенной речи в современном чувашском литературном языке // Чувашский язык, литература и фольклор: сборник статей. Чебоксары: ЧНИИЯЛИЭ, 1974. Вып. 4. С. 75 — 95.

Порядок слов в конструкциях с прямой речью в современном чувашском литературном языке // Чувашский язык и литература. Чебоксары, 1975. С. 114 — 122. (Труды / ЧНИИ; вып. 59).

Способы передачи речи без сохранения ее контуров в современном чувашском литературном языке // Чувашский язык. Чебоксары, 1976. С. 143 — 148. (Труды / ЧНИИ; вып. 66).

Графика и орфография // Современный чувашский литературный язык: в 3 т. Чебоксары: ЧНИИЯЛИЭ, 1990. Т. 1. С. 225 — 237.

Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕ (тĕрĕс çырмалли правилăсем) / И. А. Андреев редакциленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1992. 80 с. (в соавт.).

Орфографи словарĕ: тĕрĕс çырмалли правилăсем: вăтам тата аслă шкулта вĕренекенсем валли. Шупашкар: ЧРВИн редакципе изд-во пайĕ, 2002. 304 с. (в соавт.).

Чăваш орфографине шкулта вĕрентесси: чăваш чĕлхине вĕрентекенсем валли. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2007. 111 с.

Чăваш чĕлхи. 10 — 11-мĕш классем: вĕренÿ кĕнеки. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2023. 272 с.